*В. В.Никифорова*

# XX ĕмĕр вĕçĕнчи чăваш прозинчи çĕнĕ пулăмсем (1995–2000)

XX ĕмĕр хыçа юлчĕ. Историн тепĕр тапхăрĕ вĕçленнипе пĕрлех, литература хронологийĕнчи тепĕр тапхăр та вĕçленчĕ. Халĕ ăна, пирĕнтен аякках юлман пулсан та, хупă, вĕçленнĕ система тесе хаклама пулать. Ку статьян тĕп тĕллевĕ — иртнĕ ĕмĕрĕн юлашки пилĕк çулĕнче палăрнă прозăри çĕнĕлĕхсене тĕпчесси.

Кĕнекесене илес пулсассăн, çак тапхăрта та, хальхи вăхăтра та Чăваш кĕнеке издательствинче пичетленнисен шучĕ нумаях мар. 1997—1999 çулсенче уйрăмах «Тăван Атăлпа» «Ялав» журналсен пурнăçĕ те çăмăлах пулмарĕ. Тĕрлĕ сăлтавсене пула çине-çинех пĕрлештернĕ номерсем тухса пычĕç. Район издательствисем вара сахал мар кĕнеке парнелерĕç (Кӳкеç, Çĕрпӳ чи малтан). Пĕр енчен илсен, ку е вăл автор хăйĕн кĕнекине кун çути кăтартас тени, паллах, япăх пулăм мар. Çын илем патне туртăннине ырламалла кăна. Анчах илемĕ, шел пулин те, кашни кĕнекерех курăнса каймасть. Унтан та ытла, пĕр кĕнеке кăларнă автор тӳрех Писательсен союзне çул тытать. Кун пирки В. Самойловăн аван шӳт пур[1]. Сăвăçĕсем ĕмĕр пуçламăшĕнче те, кайран та сахал пулман-ха. Исаев Мĕтрин «Поэтсемпе поэзи çинчен» (1927) статйине е Д. Даниловăн «Теветкел юлташ патне янă çырăвне» (1936) аса илер. Литература процессĕ те çаврăмĕсемпе аталанать пулмалла. Çитĕнĕвĕсем тĕрлĕ тапхăрта тĕрлĕрен, паллах. Анчах хăшĕ-пĕрисем кирек хăш вăхăтра та хăвăртрах уйрăм кĕнеке кăларма пултараççĕ. Шалти цензор ĕçлемесен, ыттисен тĕрĕс хак парса писатель ятне йӳнетмелле мар пек те… Хăвăншăн анчах мар, пĕтĕм тăван литература сăн-сăпачĕшĕн яваплăх туйса. Шел, яланах çапла пулса пĕтеймест. Тата пĕр евĕрлĕ япала нумайланса кайсан, ун хакĕ те йӳнелет. Тен, вулакана çак пĕр евĕрлĕх тивĕçтерменни – вăл кĕнеке вулама пăрахнин пĕр сăлтавĕ. Тин çырма пуçланă çамрăксене писательсен шутне питĕ хăвăрт кĕртни те çак ретрех. Кунта А.

Мышкина, Е. Нарпи, Н. Ильина ячĕсене час-часах асăнаççĕ. Тӳрех каламалла, пултарулăхĕ пур вĕсен. Кун пирки эпир каярахпа уйрăм калаçăпăр. «Çамрăк» тени тĕрлĕрен пулать, паллах. Çеçпĕлпе Иванов пекки те. Çапах та, писатель е поэт ятне илтме вăхăт тĕрĕслевĕ витĕр тухмалла пек. Тата (ку, паллах, ĕмĕтре кăна пулĕ) – пĕлтерĕшĕ сăваплă пулмалла.

«Çĕнĕ пулăм» текен ăнлав çинче чарăнса тăрар. Çак статьяра вăл, пĕрремĕшĕнчен, калаçма хистекен çĕнĕ ят. Тишкерекен тапхăрта Г. Федоровăн, Е. Нарпин, А. Мышкинăн, Н. Ильинан хайлавĕсене палăртмалла. Г. Федоров – хăйне уйрăм. Унăн пĕтĕмĕшле пултарулăхне (поэзине те, прозине те) чăваш литературишĕн пысăк çитĕнӳ тесе хакламалла. Çыравçă хайлавĕсенче чăваш литературин çитĕнĕвĕсем анчах мар, тĕнче литературин çитĕнĕвĕсем вăй илсе аталаннă. Çамрăк прозăна илес пулсан вара, унта асăннă ятсен сасси уçăмлăрах илтĕнет, сăмахĕ хитререх йĕркеленет. Критика Федоров çинчен те нумай сăмах вакламарĕ-ха. Тĕрĕссипе, пĕтĕмĕшле илес пулсан та, объективлă критика юлашки çулсенче сайра тĕл пулчĕ.

«Çĕнĕ пулăм» тата – маларах палăрнă ку е вăл çыравçăн çĕнĕ, асăрхамасăр иртсе кайма çук хайлавĕ те. Урăхла каласан, сăмах кунта та çак тапхăрти илемлĕ прозăн илемлĕ тĕслĕхĕсем пирки пырать. Çав шутра Н. Петровская, Ю. Терентьев, М. Сунтал, В. Степанов, Л. Сачкова çырнисене палăртмалла. Мĕнпе уйрăлса тăраççĕ вĕсем пурте? Мĕнле йĕркеленет писателĕн хăй евĕрлĕхĕ, тĕнчи? Ыйтăвĕсем çĕнĕ те, çăмăл та мар. Чи малтанах куçа курăнаканни ĕнтĕ вăл – чĕлхе, форма. Вĕсенче авторăн тĕнчекурăмĕ, опычĕ, шайĕ сăнланать. Асăннă çыравçăсен çак тата ытти уйрăмлăхĕсене ăнланса илме тăрăшăпăр та эпир.

Прозăри темиçе авторăн хăй евĕрлĕхĕ (Б. Чиндыков, Г. Федоров, В. Степанов), ыттисенчен питĕ курăмлă уйрăлса тăраканни, тăван литературăри уйрăм пулăм пирки калаçма май парать. Тĕнче литературинче ăна «постмодернизм» теççĕ. Юлашки çулсенче термин пĕлтерĕшĕ анлăланчĕ. «<…> Постмодернизм – эпоха не столько в развитии социальной реальности, сколько сознания» (З.Бауман)[2]. Асăннă прозаиксен пултарулăхĕ литература аталанăвĕнчи тепĕр тапхăр тесен те йăнăш мар.

Кăштах теори çинче чарăнса тăрар. Паянхи культура, пĕтĕмĕшле илес пулсан, хăйне постмодернизм тесе йышăнать[3].

Çак культурăн тĕпрех уйрăмлăхĕсем: «интертекстуальность» текен концепт, вăхăт феноменне çĕнĕлле ăнланни, мифологиллĕ сăнарсем пысăк вырăн йышăнни, метафора патне туртăнни. «Интертекстлăх» текен ăнлава илес пулсан, сăмах кунта цитатăллă шухăшлав пирки пырать. Кĕскен каласан, çĕнĕ текст вăл – цитатăсен конструкцийĕ. Унăн тĕрлĕ сийĕсенче ытти текстсем, маларах çырăннисем, е çак текстпа пĕр харăс пурăнаканнисем палăрса тăраççĕ. Ку ĕнтĕ çиелти схема. Цитатăна вара çапларах ăнланмалла: «В постмодернистской прагматике под цитатой понимается не только вкрапление текстов друг в друга, но и потоки кодов, жанровые связи, тонкие парафразы, ассоциативные отсылки, едва уловимые иллюзии и мн. др.»[4]. Çак принцип ĕçленине ăн айĕнчи опытпа çыхăнтармалла пулĕ.

**Г. Федоров** пултарулăхĕ — чăваш литературинче çĕнĕ сăмах терĕмĕр. Кунта эпир «Ай, мăнтарăн, хир мулкачи»[*] ытарлă эскиз пирки калаçăпăр. Çăмăллăн вуланмасть вăл, анчах ăна вуланă чух ăс валли те, чун валли те киленмелли нумай тупăнать. Литературăра тĕрлĕрен Сăмах пулать. Çиелтен пăхсан яка, илемлĕ, йăлтăркка, шалтан вара — пушă. Г. Федоровăн сăмахĕ кăткăс, тикĕссĕн пымасть те пек, пăтравлăрах та пек малтанах. Тӳрех парăнмасть вăл вулакана. Урăхла каласан, материал хирĕç тăрасшăн, вулаканпа пĕр тан пуласшăн. Хăйне хăй çителĕклĕ Текст вăл. Çак Текстри Сăмах чĕрĕ, сĕткенлĕ… Вырăсла тата çапла калама пулатчĕ: «концентрированное, почти осязаемое Слово». Текст ăшне кĕрсе кайсан, автор кашни сăмаха Флобер пек шыранă пулĕ тесе калас килет. Çав вăхăтрах ку вăл – ăшран, чĕре çумĕнчен тухакан сăмах. Кашни саманта туйса илсе ăна çеç тивĕçлĕ пĕлтерĕш тупма тăрăшни, васкамасăр, чун витĕр сăрхăнтарса кăларнă сăмах.

*«<…> Ма килнĕ вăл çак çутă тĕнчене? Утă çулма-и? Е шухăш шухăшлама? Шухăшлать-ха шухăшне — пӳлмери тырри хутшăнмасть уншăн,*

---

[*] «Вăр-вăр кайăк, вăр кайăк» (1992–1995) // Тăван Атăл. 1996. 10№. 14–54 с. (пĕрремĕш повеç). Малашне пур çĕрте те цитатăсен страницисене çеç кăтаратпăр.

*тырри-пулли ӳсӗнерех пымасть, кӗсьери укҫа шучӗ мӑнӑланмасть. Пурнӑҫӗ те мыскара ҫеҫ иккен*. Мыскара пулмасӑр – чипер ӑслӑ-пуҫлӑ ҫӗртех штаккетник ҫунтарать кӑмакана пӑрахса, чипер выртан юман юпасене тӗкҫӗртен татса ваклать…» (23 с.);*

*«<…> Хӗрӳ вӑйӑ ӗнтӗ, мӗн каламалли пур! Кулӑш та мыскара! Мӗлки мар, кӗлетки те… Те пур Ясак, те ҫук вӑл. Хӗрӳсӗр пуҫне нимӗн те кӗмест ӑша, нимӗн те тухмасть унтан» (23 с.);*

*«Пурнӑҫ вӑл таҫти шӑтӑкра та мыскараллӑ» (24 с.);*

*«Каллех ашшӗ вилсен кӗвӗленнӗ сӑвӑ килсе кӗрет пуҫне. Епле манӑҫман-ха вӑл, эй? Мыскара ӗнтӗ пӗр пӑхма: нихҫан сӗмленмен-туман япала килсе кӗчӗ Ҫирки чунне ашшӗ вилнишӗн хурланнипе пӗрле…» (29 с.);*

*«Михаил, тур пул, чарӑн. Мӗн мыскари кӑтартатӑн ара? – Ан тив, ташлатӑр, савӑнтӑр пурӑннӑ чух, – сӑмах хушать Матви. – Хӑш чух кӑмӑла пушатсан та юрать ӑна» (32 с.);*

*«Ан калаҫ кирлӗ мара, Ҫирки, – ҫемҫен калать хӗр. Ҫирки ун мыскарисем пирки пачах тӗшмӗртменнине чухланӑ хӗр ирӗкленет, хӑйне хӑюллӑрах та тыткалать вӑл» (39 с.);*

*«Рехетленсе выртма вӑхӑт ҫук, ҫанталӑк мыскари тӗрлӗрен пулма пултарать» (39 с.);*

*«Ай, мыскара. Ну камит те, эй! Мӗнле ҫӑрӑлса тухмалла халь ку япаларан. Хӑйне шурлӑха анса кайнӑ пек туять ватӑ: сивӗ, тӗттӗм, нӳрӗ…» (48 с.);*

*«Мӗн тӑвӑн? Пурнӑҫ мыскари кашнин хӑйне ҫав!» (48 с.).*

Мӗншӗн тӑтӑшах пурнӑҫа мыскарапа танлаштараҫҫӗ геройсем? Пурнӑҫӗ ытлашши йывӑр пулнӑран мар-ши? Ҫак йывӑрлӑха кӑштах та пулин ҫӑмӑллатас тесе мар-ши? Тен, шухӑшлавра та пулин мыскарапа шайлаштарни усӑннӑ ҫунатсене кӑштах та пулин ҫӗклеме май парать? «Карнавализация сознания» текен термин пур М. Бахтинӑн. Анлӑн пӑхас пулсан, карнавал кивви пӗтнине, ҫав вӑхӑтрах ҫӗнни ҫуралнине уявлать. Урӑхла каласан, ҫӗнни патне ҫул уҫӑлать. Малтанах – шухӑшлавра, кайран, тен, пурнӑҫра та. Кашни халӑхӑн, вӑхӑтӑн

тĕрлĕрен пулса иртет ку улшăну (Рабле, Декамерон…). Чăвашăн мыскари те хурлăхлăрах пек, савăнăçĕ те хĕрхӳрех…

Юрий Скворцов пултарулăхне тĕпченĕскер, унăн поэтикин хăй евĕрлĕхне, илемлĕх тĕнчи туйăмне те ăша илнĕ прозаик. Интертекстлăх формипе йĕркеленет çак ен. Çутçанталăкăн пĕр евĕрлĕ пулăмĕсене (вăрман, кайăк-кĕшĕк, çил сăнарĕсене) юратнинче те сисĕнет вăл, реминисценци шайĕнче те. Лисукпа Çирки уйрăлни Коляпа Укахви уйрăлнине аса илтерет. Çирки вăрманта кушакпа тĕл пулни – Укахвине кушак тапăнни, вăрманта чунра шиклĕх кĕрсе вырнаçни пĕр ретре. Е Уярăн «çынсем хушшинче – вăрманти пек çӳретпĕр» текен шухăшăн ахрăмĕ те илтĕнсе каять пек. Хайлав ятĕнче хăйĕнче вара – «Чухăн çын пурнăçĕ — хирти мулкач пурнăçĕ» (Гр. Филиппов) тенин, «Мулкач юррин»…

Малалла вулар-ха:

*Ю. Скворцов: «<…>Ĕнтĕ вара сан, çак кĕмен пулăшăн ларса кун irттернĕ пекех, вăхăту иртсе каять… «Киле» каймалла сан…»* («Шыв симĕсленнĕ чух»)..

*Г. Федоров: «<…> Анчах та ĕнтĕ ĕнсе хыçне синкерлĕ вăхăт çитсе тăнă; каймалла сан, теприне вырăн памалла. Унăн та пурăнас килет пуль, сан анчах мар…»* (15 с.).

*Ю. Скворцов: «<…> Пурнăç та çак пулă тытни пекех. Кĕтетĕн, кĕтетĕн… Акă ыран лайăхрах пурăнăп-ха, акă виçмине лайăхрах пурăнăп… Пĕр çул пурăнатăн, ним те çук, тепре пурăнатăн – пĕр йăмпăлтăк пек телей çакланать. Тепĕр темиçе çул пурăнсан тепĕр сĕлĕ пĕрчи пек телей лекет…»* («Шыв симĕсленнĕ чух»).

*Г.Федоров: «<…> Этем пурнăçĕ те чисти çавнашкал пулĕ çав! Паянхи çырлахтармасть çынна, пĕрмаях ыранхине кĕтет вăл. Çитет те ырана умра тата тепĕр ыран сăнĕ-пичĕ ӳтленме ĕлкĕрнĕ, ĕнтĕ татах малалла йыхăрать вăл этеме, утсах утма хушать».* (28 с.).

Скворцов геройĕсем çĕр çинчи пурнăçа ĕмĕрлĕхĕн пĕр с а м а н ч ĕ тесе йышăнаççĕ. Çак саманта чарса лартсах тенĕ пек туйса

илесшĕн çыравçă. Унăн кашни хусканăвне асра хăварасшăн вăл. Федоров çак ĕмĕрлĕх çаврăмсенчен тăнă пек курать. Геройăн пурнăçĕ – çак Пысăк Вăхăтри пĕр çаврăм (çĕр çинчи пурнăçĕ те çаврăмсенчен йĕркеленет пек). Ахальтен мар Çирки те хăйĕн шăпи ашшĕн шăпи пек пуласран хăрать: *«Аса илет те хĕрхӳленсе кулать çамрăк арçын: чăнласах ашшĕ мĕлки пулса юлчĕ-ши?»* (34 с.). Çавăнпах-тăр повеçри вăхăт хăвăртрах чупать. Пăрпассон лаша пек ыткăнса пырать вăл. Вăхăт таппине час-часах «авăк», «сăтăркка» виçисемпе виçни те çакнах çирĕплетет. Кăркка Михалĕпе ун ывăлĕн Çиркин «пăрпассон мар, йăмшак лаша кĕлетки те пулаймарĕ» (34 с.). Пĕччен Пурисра, е Пĕччен Пăрпассонра вара пăрпассонлăхĕ юлмарĕ. Самана урапи çинче ларса пыма çăмăл мар пуль çав…

*«Пĕр Павăл кăна, пĕр çав кăна тапранаймасть вырăнтан. Тăнă та тăрать тавралăха куç сиктерми сăнаса. Çук, ĕлкĕреймест ыткăнса пыракан тĕнче хыççăн, куçпа курса, чунпа туйса юлаймасть улшăнса тăракан çанталăка. Вĕлт-вĕлт иртсе пырать кашни самант, кашни чĕрĕм авăк» (14 с.).* Чăваш, кирек епле тăрăшсан та, паянхи кунпа пурăнма пĕлсех çитерейместь çав. Е иртни чунне кăшланипе, е пуласси çинчен куляннипе, паянхи кун илемлĕхĕпе (е илемсĕрлĕхĕпе), ăна хăй чĕрипе туйма пултарсан та, ăспа ăнланса усă курмах пултараймасть. Повеçре сăнланнă самани те çав тери синкерлĕ ĕнтĕ, уйрăм çынна «никам та мар эс халь» текенни (18 с.), «çава тытса этем ĕмĕт-шанăçне çулаканни» (20 с.). Çак саманан хăй евĕрлĕхне анчах мар, этем пурнăçĕн тупсăмне те шырать автор.

Хайлаври сюжет çав тери хăйне евĕрлĕ йĕркеленет Федоровăн. Ĕç пулăмсен йĕркисем пĕр-пĕринпе тĕрлĕ енлĕ çыхăнаççĕ: çывхараççĕ те аякка уйрăлса каяççĕ, пĕр-пĕрин хыççăн черетленеççĕ, чăн пурнăçпа тĕлĕк хушшинчи чикĕсем çухалаççĕ…

Çирки вăрманта çӳрет, шалалла кĕнĕçемĕн «шухăш вăрманне» те кĕрсе каять, шухăшĕпе пурнăçĕн пысăк пайне тепĕр хут пурăнса ирттерет, тĕлĕксем тыткăнне кĕрсе ӳкет (иккĕмĕш сыпăк, 24–35 с.). Ун шухăшлав юхăмĕ хыççăн кайса вулакан вăл вăрманта çӳренине те маннă пек пулать («Çӳре-çӳре каç та

турĕ ак каччă, мунчи сивĕнсе кайрĕ пуль тахçанах, Павăл пиччĕшĕ те вăрçин вăрçать пуль ăна» – текен предложени патне çитетĕн те, вăл халĕ те вăрманта иккенне аса илетĕн. 30 с.). Çиркипе пĕрле ун пурнăçĕн саманчĕсене куç умне кăларса тăратса чĕрипе пурăнса ирттеретĕн.

*«…Кăвак мучăш каланă сăмах Çирки ăсĕнче пуп каланипе пĕрлешсе каять, темле ăнланмалла мар мăкăлтанчăк пулса вырнаçать чĕрене. Ун тупсăмне ăнкарса пĕтерейместь çамрăк арçын: кур-ха хĕвел çаврăнăш шĕкĕлчеççĕ тет; тĕп сакай айĕ тата мĕне пĕлтерет-ши ку?.. Пĕрре-пĕрре юмăç патне çитсе килмелле-ха Çиркин ятнех. Мĕн ăсласа калĕ-ши Тинĕс Варвари?.. Юмăç тем те пĕр лĕпĕртетни те лăплантармарĕ каччăн чунне, канăçне ытларах çухатрĕ кăна. Ытла та юмахланса кайнă пек туйăнчĕ Варвари сăмахĕ:*

*— Çич çул юппинче çич юпа, çич юпа çинче çич кайăк. Çичĕ çăмарта тунă та – упрайман, такам пырса пурне те ватнă, ăшне юхтарса кăларнă.*

*…Вуншар çул иртсен тупăнчĕ уççи – учитель çул çӳремелле, тĕнче курмалла тетчĕ те ав…» (27 с.).* Текст пайĕсем Федоровăн (пайрăмсенчен, вăл шутра пĕчĕккисем те, пысăк-кисем те, сăмах çаврăнăшĕсенчен пуçланса ĕç-пулăм йĕрĕ таранах) пĕр-пĕринпе тачă çыхăннă. Малтан пайрăм аталанать те, кайран тĕрĕсленет. Кайран куç умне тухни малтанхи патне таврăнать. Сăмахран, Лисук пуçĕ çинче темĕнле асап пулнине эпир малтанах пĕлетпĕр. Вăл чирлине, «клуххуйне» – каярах, тата темиçе хут та – тĕрлĕ лару-тăрура. Е вăл карта хушшипе çамрăксен вăййине вăрттăн пăхса тăни – çав саманта ашшĕ те курнине чылай кайран пĕлетпĕр. Кунта çакна палăртса хăвармалла: авторăн пултарулăхне пĕтĕмĕшле илес пулсан, ăна пĕр пысăк Текст тесе йышăнни тĕрĕсех пек туйăнать. Федоровăн хайлавĕсем (сăвă-и вăл е проза хайлавĕ) пĕр-пĕринпе тĕрлĕ енлĕ çыхăнаççĕ, ассоциаци шайĕнче те пулин, вĕсем пĕр текста малалла тăсаççĕ тейĕн. Çĕр çине килнĕ этемĕн пурнăç пĕлтерĕшне, вăрттăнлăхне, шалти тарăнлăхне шыраççĕ. Çавăнпа та çак авторăн калас сăмахĕ час-часах ярăмсене хывăнасшăн («Хĕсмет», «Эпиграф», «Вăйăм», «Рондо»… ярăм-поэмăсем). Çавăнпах пуль ун умне çакнашкал ыйтусем тухса тăраççĕ:

«Пĕлместĕп: те ку эпилог, те чун çунтармăш çĕн пролог?..» («Ĕнтĕрĕк» поэма)[5]. Çакăн йышши уйрăмлăхсем Федоров произведенийĕсене интеллектуаллă хайлавсен чиккинче хаклама май параççĕ. XX-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче нимĕç писателĕ Т. Манн «интеллектуаллă роман» текен ăнлава тĕнче культурине кĕртет. Ун шухăшĕпе, «философиллĕ роман» ăнлав XX ĕмĕр валли çителĕксĕр, вăл Вольтер валли çитĕ, XX ĕмĕрти произведенисем вара ку чикĕсенчен тухаççĕ. «Интеллектуальный роман – следствие развития философского романа», – тет вăл. Терминсене татăклă никам та палăртайман, çавăнпа та вĕсене час-часах синонимсем пек усă кураççĕ. Уйрăмлăхсем пурах ĕнтĕ. Тĕпреххисене çапларах палăртма пулать: интеллектуаллă прозăри содержани татах та тарăнланать, шухăш нумайланать. Çавна май çыру техники те кăткăсланать. Çавнашкал проза вулакантан та нумайрах кĕтет. Паллах, вăл философиллĕ проза çитĕнĕвĕсем урлă каçса каймасть, вĕсене те произведени «никĕсне» хывса малалла каять. Хăшĕ-пĕрисене асăнса хăварар: хайлав тĕрлĕ йышши ассоциаци çуратма пултарни (сюжет, стиль… шайĕнче); символсем, аллегорисем йышлă пулни; миф (анлă пĕлтерĕшпе), притча пысăк вырăн йышăнни; философиллĕ диалог тĕпре пулни (ăна герой хăйпе хăй йĕркелет, сюжет шайĕнче те диалог тĕпре). Геройсен шухăшлавĕ, чĕлхи (хайлав йĕркелĕвне шута илмесĕр) ахаль вулакана çывăх пулни те философиллĕ проза чиккинче. Вырăнти калаçăвăн уйрăмлăхĕсемпе усă курнинче анчах мар, чăваш çынни тĕнче çине, пурнăçпа шăпа тата хăй çине мĕнле пăхнине туйса, ăнкарса илсе ăна тивĕçлĕ палăртма пултарнинче те туйăнать çак çывăхлăх.

Вырăнĕ-вырăнĕпе геройсен шухăшлавĕн йĕркеленĕвĕ ăн юхăмне (психологизм) аса илтерет. Шалти монолог пĕр тема тавра йĕркеленет пулсан, ăн юхăмĕ – нумай темăллă, кунпа пĕрлех унта геройсен сисĕмĕ-туйăмĕ те, кăмăл-туйăмĕ те сăнарланать.

Ытарлă эскизăн тытăмĕнче М. Пруст çырăвĕн хăй евĕрлĕхĕн сĕмĕ те сисĕнет: произведени схеминче, сюжет йĕркеленĕвĕнче, шалти çĕвĕсенче, ăн юхăмĕн уйрăмлăхĕсенче. Геройсен шалти пурнăçĕн ӳкерчĕкĕсем татти-сыпписĕр «юхăм» евĕрлĕ çеç иртмеççĕ пирĕн умран, вĕсене тĕплĕ шухăшласа

тунӑ, курӑмлӑрах самантсем ҫинче ытларах чарӑнса тӑнӑ. Прустӑн «субъективлӑ эпопейи» ҫичӗ пайран тӑрать. «Субъективлӑ эпопея» – пӗр ҫын пурнӑҫӗ, шалти тӗнчи урлӑ, ун куҫӗпе саманана, вӑхӑта ӑнланнине, обществӑри пулӑмсене сӑнласа кӑтартма пултарни. Федоров хайлавӗ те, ҫавнашкал тӗллеве тӗпе хунӑскер, эпир пӗлнӗ тӑрӑх, темиҫе вӗҫленнӗ пайран тӑмалла, ҫав вӑхӑтрах пӗрлӗхлӗ произведени пулмалла.

Ҫапах та наци идейине, «шӑнӑрне»[6] тупма ӑнтӑлакан ҫыравҫӑн пултарулӑхӗнче[*] ку е вӑл витӗмӗн, традицин паллисене курни тӗпре мар, тӗнче культурипе ҫывӑхлатакан самантсем вара интереслӗ. Ҫӗнни, хӑй евӗрли, паллах, ун умӗн пухӑннӑ пуянлӑха шута илмесӗр пулма пултараймасть. Ӳнерҫӗн тавракурӑмӗ мӗн чухлӗ анлӑрах, ҫавӑн чухлӗ ытларах традици пӗрлешсе, х ӑ й е в ӗ р л и н е ҫуралса ӳсме пулӑшать. Ӑна йӗркеленме пӗлӳ кӑна ҫителӗксӗр. Шалтан ҫав шайра хирӗҫ тӑма пултаракан никӗс, тӗрев, шӑнӑр кирлӗ, тӗнчене хӑв куҫупа курма пултарни, чунупа тарӑн туйса илме пӗлни.

«Ытарлӑ эскиз»[**] тесе палӑртать повеҫсен ярӑмне Георгий Федоров. Пӗр енчен илсен, ҫапла палӑртни – сӑпайлӑх, тепӗр енчен – хӑйӗнчен нумай ыйтни те. Мехелӗпе хайлав роман патне туртӑнмалла пек. Литературӑмӑрта паянхи кун жанра кун пек палӑртни анчах мар, кунашкал Ҫыру хӑй те тӗл пулмасть.

**Владимир Степанов** прози традициллӗ жанрсен пултарӑвне (чиккисене е тарӑнӑшне) анлӑлатнипе уйрӑлса тӑрать. Уйрӑмах фантастикӑлла жанрсенче вӑл халиччен никам та туйса илсе усӑ курман тӗссем шыраса тупнӑ. Статьяра ҫак тапхӑрта пичетленнӗ повеҫпе роман пирки сӑмах пырӗ.

«Ӑнтӑлу е Ҫӗр тыткӑнӗ» фантастикӑллӑ повеҫре (1990)[***] В. Абрамов лирикӑпа философи ҫыхӑннине палӑртать[7]. Степанов Тексчӗ илемлӗ, таса, тӳрӗ (откровенный, искренний). Ӑна хӑйӗнче тӑтӑш тӗл пулакан чечек пек алӑпа тытас та килмест. Ӗмӗрлӗхри таса Чунӑн таса хусканӑвӗсене Сӑмах ҫине тивӗҫлӗ куҫарма тӑрӑшнӑ вӑл.

---

[*] «Чӑваш наци пурнӑҫӑн моделӗ» (Н. Ишентей) еплерех «калӑпланни» пирки чарӑнса тӑмӑпӑр, вӑл уйрӑммӑн интереслӗ калаҫу пулмалла.

[*] *Иккӗмӗш повеҫӗ «Туй ачи, пуса ачи» 2002 ҫ. «Тӑван Атӑлӑн» 2–6 №–сенче пичетленнӗ.

[*] ** Ялав. 1998. 7№. 4–34 с.

*«<...> Этемĕн чунĕ пурин те пĕр тĕрлĕ. Вăл хăйне евĕр те çĕршыв, те уçлăх, анчах пур этемшĕн те вăл пурин те пĕр тĕрлĕ – кашнин этем чунĕ ытти этемсен чунĕпе ним енчен те уйрăлса тăмасть. Пурнан пурнăçра мăшкăлласа пĕтернĕ чун пирки мар сăмах, пурнан пурнăçри чун пирĕн чĕлхепе ӳте парăннă; урăх чун: хăшĕ-пĕрисем Турă пană, теприсем анне панă, виççĕмĕшĕсем çутçанталăк панă текен чăн-чăн Чун пирки <...>».*

*...Чун патне сăмахпа та çывхарма пулать, шухăшпа та. Çитме вара ун патне туйăм-чун урлă çеç май пур. Туйăма шухăшсем, сăмахсем пăхăнсан – çул кĕскелет. Анчах асăрханăр, этемсем: шухăшсен тĕнчипе пурнăç тĕнчи тĕрлĕрен.*

*Çавăнпа эпир кĕлĕсем каласа, такмаксене итлесе хамăра çеç паракан чун сукмакне çухататпăр та, темле аслă çул шыратпăр. Тен, сана кĕлĕсем кирлĕ те мар, тен, вĕсемсĕр Чун патне çитесси çывăхрах? Эх, этем: эсĕ пурнăçра пĕччен, çавăнпа Чуну патне çитме анлă çул çук, унталла кашнин хăйĕн пĕртен-пĕр сукмак».* (23 с.)

Произведени вулакана хăйĕн тĕнчи пирки шухăша ярать, чун хĕлĕхĕсене хускатса ĕмĕрлĕх кĕввине туйма, итлеме йыхăрать. Кун пекки час-часах тĕл пулмасть.

Текст автора хăйне те, вулакана та вĕçне çитиех хăй тĕнчине кĕрсе кайма чĕнет. Шухăшлав йĕрĕ ытларах афоризмла кĕске предложенисемпе йĕркеленет. Кунта интертекстлăх принципĕ ĕçленине те палăртса хăвармалла. Куçа тӳрех курăнаканни вăл – П. Яккусен сăввисене кĕртни. Хăш-пĕр самантсене автор хăй кĕскен ăнлантарса парать (постмодернизм текстĕнче ăнлантарусем те пысăк пĕлтерĕшлĕ): «сăмах шыв молекулине кислородпа водород çине пайласа (космосран илсе аннă энергие пула), океана çĕр чăмăрĕпе пĕрле сирпĕтсе яни çинчен, е «повеçре тинĕс сăмах пур çĕрте те тĕнче океанĕ пĕлтерĕшли» çинчен. «Пихампар йыттинче» те çавах. Тест тытăмĕнче эпиграфсем, Ницше вĕрентĕвĕ, авалхи германецсен мифĕ, динозаврсен вăхăтне контекста кĕртни, чĕрчунсен пурнăçĕ йĕркисем, чăваш тĕррин тупсăмĕ, çапăçуçăсен тимĕр тумĕн историйĕ

пирки шухăшлани – пурте пĕлтерĕшлĕ.

Повесть никĕсĕнче – илемлĕ миф. Çĕр çинчи пурнăç хăналăх, ĕмĕрлĕхри – вилĕмсĕр, самантлăх юратупа вĕçĕ-хĕррисĕр юрату пур тесе ĕнентерекекенни. Тĕп геройсем Аоэнэла тата Вăл (Эпĕ). Ч е ч е к , У ç л ă х , Ç ĕ р йышши темиçе пĕлтерĕшлĕ метафорасем текст структуринче куçăмлă. Вĕсем текста чĕрĕлĕх, темиçе тĕрлĕ сĕм кĕртеççĕ.

«Пихампар йытти» роман (1999)* – чăваш халăхĕн аваллăхне, несĕлсен чун-чĕм выртăнне паянхи кун шайĕнче ăнланса илме тăрăшни, чăваш тĕнчишĕн тунсăхлани. Ăна автор хăй «этнос фэнтезийĕ» тенĕ.

*«Шухăшсене пĕтĕмлетмесĕрех тӳрех паллă: этем текен чĕр чун тĕнчерен çухалсан, хыççăн килекен аслă чунсем кашкăртан пулса каяççĕ. Ку çеç те мар-ха, тен, чăвашсем ĕнтĕ кашкăртан, эволюцие кая хăварса, пулса кайма те ĕлкĕрнĕ»* (61 с.). Чăваш пурнăçĕнчи Пихампар пĕлтерĕшĕ çапларах: вăл çынсене шăпа уйăрса паракан, телей çыракан Турă. Тата ăна выльăх-чĕрлĕх Турри те, тискер кайăксен (кашкăрсен) Турри те теççĕ. Роман центрĕнче – миф автор фантазийĕпе чĕрĕлсе тăни.

Пуçламăшĕпе вĕçĕ паянхи пурнăçа, паянхи чăнлăха кăтартаççĕ. *«...Пĕлĕтсем – Çĕр чăмăрĕ астăвăмĕн пуххи. Çын ăсĕ кĕске, Çĕр чăмăрĕн астăвăмĕ аслă. Çĕр чăмăрĕ ним те манса кайман. Тъпери пĕлĕтсен юхăмĕ-улшăнăвĕ этемсене ĕлĕк-авал мĕн пулса иртнине кăтартать.*

*Пăхăр пĕлĕтсене те сăнăр эсир: хушăран Кашкăр турри те, Шурă хăрт пир хуна утланнă аслă архар Услан Кайăк – Çăвăр Кашкăр – Тайкăр – Пирхум та курăнать унта...» (61 с.)*

В ă х ă т та çавнашкал текстра традициллĕ ăнлава вырнаçмасть (иртни – хальхи – пуласси = линейное время). «Идея непрывывности бытия и становления, их фундаментального единства может быть обнаружена и в постмодернистской нарратологии (см. Нарратив). Так, Лиотар специально останавливался на этом вопросе: согласно его модели темпоральность нарратива не развернута в линейную структуру от прошлого к будущему, но

* Я л а в. 1999. 10№.. 7–64 с.

спрессована в актуальную презентативность: «именно рассказывание в настоящем разворачивает каждый раз призрачную временность, простирающуюся между «я слышал» и «вы услышите»[8].

Фантастика жанрнех илес пулсассӑн, унта уйрӑм тӑракан тепӗр ят пур. Вӑл – **Нелли Петровская**. Ун хайлавӗсене ҫӗнӗ юхӑм (мистикӑпа фантасмагориллӗ юхӑм) пек хакланипе, «повести мистического характера, близкие к фантастическим»[9] тесе палӑртнипе килӗшмелле.

«Тухатмӑш» роман (1995)[**] – чунне вуниккӗрех усала сутса тухатмӑш пулса тӑнӑ Минке шӑпи пирки. Сюжечӗ тӗнче литературинче ҫӗнӗ мар, паллах. Анчах та Петровская ку сюжета хӗрарӑм трагедийӗ витӗр хӑйне евӗр уҫса пама пултарнӑ. Тата вуникӗ ҫулхи ачана усала хирӗҫ тӑма пултарайманшӑн айӑплама юрать-ши? Сӑнара пур енчен те тарӑн кӑтартса панӑ, уйрӑмах унӑн пуш хирти пурнӑҫне. Унта Минке ҫутҫанталӑкпа тата хушӑран усал вӑйсемпе хутшӑннисӗр пуҫне – пӗччен. Героя хӑйпе хӑй анчах хӑварса пысӑк хайлав е унӑн пысӑк пайне йӗркелеме ҫӑмӑл мар. Ку енчен илсен, Петровскаян тӗслӗхӗ ӑнӑҫлӑ. Минке тухатмӑш асамҫӑ анчах мар, ахаль хӗрарӑм та. Вӑл та ҫӗр ҫинчи кашни хӗрарӑм пекех телейлӗ пуласшӑн. Ҫавӑнпа та судра Хура Ҫунатлисемпе ытти усалсем умӗнче вӑл тьрре тухма пӑхнинче нумай тӗрӗсси пур. Ҫав тери ӗнентерӳллӗ хӳтӗлет хӑйне Минке. Тамӑкра вӑл пӑлхав ҫӗкленинчен те тӗлӗнместӗн. Роман вӗҫӗнче коммунистсене, вӗсен ҫул пуҫне пародиленӗ[*]. Вӗсем тума пуҫланӑ обществӑна усалсем тамӑкпа танлаштараҫҫӗ.

Петровскаян ҫак тапхӑрта пичетленнӗ произведенийӗсем пурте мистикӑллӑ туртӑмлӑ. (Чун панӑ чух. Калав // Ялав, 1995. 4 №. 14–30 с.; Хӗрпе вилӗм. Калав (1994) // Хыпар, 1997; Ялав, 2000. Ҫурла 15. 5 №. 20–25 с.; Хура ангел. Роман (1986–1987) // Тӑван Атӑл, 1999. 1 №. 1–28. с. 2 №. 21–48 с.. Ҫак ҫултах Чӑваш кӗнеке издательствинче пӗтӗм кӗнеки тухать; Масар чартакӗ. Повесть (1996) // Ялав, 2000, 9 №. 10–46 с.). Юлашки иккӗшне, куратпӑр ӗнтӗ, темиҫе ҫултан анчах пичетленӗ. «Хура ангел» мӗншӗн пичетленменни – хӑйне

---

[**]Ялав. 1997. 1–5 №№ Хайлавсене хӑҫан ҫырнине Н. Петровский-Теветкел палӑртнӑ.

[*]Ялав. 1997. 4–5 №№.

уйрăм истори. Вăхăтра пичетленнĕ пулсан шавĕ ытларах пулатчĕ ĕнтĕ, пĕлтерĕшĕ урăхларах. Анчах та литература пурнăçне вĕсем 90-мĕш çулсен иккĕмĕш çурринче тин кĕреççĕ. Çавăнпа та çак тапхăрти пулăм пек хаклани йăнăш мар тесе шутлама май парать. Вĕсенче пĕр мотив тĕпре – этем Усал вăйсемпе хутшăнăва кĕни, вĕсене хирĕç тăма хăтланни. Хăш-пĕр вырăнсенче вăл аталанса сюжет пĕрпеклĕхне те куçса кайма тăрать (усалсене сăнлани, вĕсен эшкерĕ хĕрарăм кĕлеткипе хуçа пулас тени, масар çинче пулса иртекен ĕçсем). Çак хутшăнусенче Петровская Çынна тĕрĕслет. Унтан та ытла, çыравçăна çак хутшăнусем хăйсем, вĕсенче темĕнле хăйне евĕрлĕ асамлăх, киленĕç илĕртет пек, пĕлменни, хăратаканни пулсан та. Çавăнпа пуль хăш-пĕр чух автор Çутă Тĕттĕме çĕнтернине çителĕклех ĕнентереймест. Сăмахран, «Масар чартакĕнче» Уртемей сывлани пирки икĕ пĕчĕк абзацра çеç çырса кăтартнă. Сюжет логикипе вĕçĕнчи ĕç-пулăмсене аталантармалла пулнă пек. Епле пулсан та, Петровскаян хайлавĕсене литературăра çитĕнӳ тесе йышăнмалла. Çыравçă этем пурнăçĕнчи никамах та уçман тĕттĕм кĕтессене уçса пăхса ыттисене те кăтартма тăрăшнă. Тума юраман утăмсенчен те асăрхаттарасшăн пулнă пулĕ.

90-мĕш çулсенче мистикăллă туртăм **Е. Нарпин** темиçе калавĕнче те сисĕнет (Сетреслу ĕмĕрĕ // Тăван Атăл, 1990. 1 №. С. 44–50; Асамçă пике, е çывăрмасăр тĕлленнĕ тĕлĕк // Пике, 1995. 3–4№. С. 4–9; Çур çĕр хыççăнхи çулçӳрев // Пике, 1996. 11–12№. С. 21–26). Петровскаян витĕмĕ мар, Нарпин илемлĕ тĕнчин çав вăхăтри шалти туртăмĕ пулнă тесен тĕрĕсрех пек кунта. Чи малтанах хайлавĕсем хăçан пичетленнине шута илсе.

XX ĕмĕр вĕçĕнче прозăра, тĕрĕсрех, пĕтĕм литературăра, хĕрарăмсен пултарулăхĕ вăйлă аталанать. Пĕтĕмĕшле илсен, ытти облаçсенче те хĕрарăмсем мала тухнине сăнама пулать, чăваш обществинче анчах мар. Хальхи хĕрарăм вăл – ĕçлĕ хĕрарăм та, политик та. Сăлтавĕсем ĕнтĕ тĕрлĕ. Анчах та арканма тăракан тĕнчене çураçтарса йĕркелеме хĕрарăмăн хăюлăхĕ те, мехелĕ те ытларах курăнать. Хĕрарăмсен прозинче Е. Нарпи çамрăк прозаикăн пултарулăхне асăрхамалли сăлтавсем пур. 90-мĕш çулсен пуçламăшĕнче вăл вулакана чăнлăхпа мистикăлла пулăмсене ăнăçлă пĕрлештерме пултарнипе илĕртет.

Вĕсенче те, каярах çырнă икĕ повеçре* те çамрăксем çинчен сăмах пырать.

*«Эпĕ пĕтĕм кĕлеткепе чĕтренсе ун çумне тĕршĕнтĕм. Мĕншĕн çакнашкалах йӳнеçтеретĕп-ха эпĕ ăна? Эпĕ марччĕ-и-ха ун çинчен шутланипе кунĕ-кунĕпе тĕлĕкри пек çӳрекенни? Халь мĕншĕн туйăма хирĕç каятăп? Иртсе кайнă юратăвăм чĕрене амантса хăварнăран, халь тепре çавнашкал килсе тухассинчен сыхланнăран мар-и ку?»* (Пăрлă шыври хĕвел пайăрки, 29 с.).

*«..Юрату теме те çĕнтерет тесе ĕнентернĕ эп хама. Ку вăл романтикăлла хайлавсенче е йăпатмăш киносенче çеç пулнине ăша хывма пачах та тĕлленмен. Пурăнан пурнăçра пĕтĕмпех урăхла çаврăнса тухать-çке...»* (49 с.).

Событисене анчах мар, чун-чĕре хусканăвĕсене те лайăх анализ тума пĕлет автор. Люба хăйне хакланинче автор витĕмĕ сисĕнет, хăш-пĕр чух вĕсем пĕрлешсех каяççĕ пек. Анчах та ытларах чухне ку витĕм виçерен тухса каймасть, ăспа туйăма çураçтарса «объективлăх» тени патне çывхарать.

Арçынпа Хĕрарăм (Марсельпе Люба) пĕр-пĕрин патне çывхарса пынă утăмсене илемлĕ сăнланă Нарпи. Тасалăх хуçаланать ку ӳкерчĕксенче. Пурте упраса хăвараймаççĕ çав тасалăха, хăйсен сăмахĕ таса пулăмсем пирки пулсан та. Чи малтанах, Илем мĕнне шалти туйăмпа туйса илме пултарни кирлĕ кунта. Нарпин çак пултарулăх пур пек туйăнать. Хайлаври çутта эпиграф кăштах тĕттĕмлетет (уйрăмах юлашки икĕ йĕрки). Вăл вулакана чикĕрен тухмалла маррине, ытлашши ĕмĕтленме юраманнине асăрхаттарать. Тата произведенийĕ хăй çак йĕркесенчен илемлĕрех, пĕлтерĕшĕ анлăрах.

Тепĕр повеçĕнче те Нарпи юрату темине аталантарать. Çемьеллĕ пурнăçра юратса пĕрлешнĕ çынсен туйăмĕсем мĕнле улшăнса пыни пирки те чи таса, ачаш туйăмсене тасамарлăхран, кулленхи пурнăç пĕрпеклĕхĕнче чи кирлине упраса хăварма мĕн тери йывăр пулни пирки те çырать прозаик.

Пурнăçа хурапа шурă хуçаланакан вырăн пек курмасть Нарпи. Хăйĕн геройĕсен тĕрлĕ кăмăл-туйăм хусканăвĕсене те сăмах çине типтерлĕ, асăрханса

* Пăрлă шыври хĕвел пайăрки // Ялав. 1995. 5№. 7–58 с. ; Чечексем çеçке тăксан // Ялав. 1998. 6№. 6–52 с.

куçарма пултарать:

*«Мĕн пĕлетĕн?» – ыйтас килчĕ манăн унран. Çук сăмахĕсем кĕленче евĕр ӳксе ванасран шикленнĕн, шарламарăм <…>. Кĕçех шкулта вĕреннĕ чухнехиллех хама ирĕклĕн тытма пуçларăм, чунăмри туйăмсене шаларах хуса кĕртрĕм те, пĕчĕкçĕ арчана питĕрсе илтĕм, шалтăрт! кăна çăра çакрăм* (Чечексем çеçке тăксан, 15 с.).

*«Вăл тухса кайсан шалта – эпĕ çав япалана яланах чун пуль тетĕп – юншăхса ыратма пуçларĕ»* (25 с.).

*«Çапла каларăм-ха, анчах чунра, те вăл малтан чĕнмесĕр ларнăран, темĕн шăтăрт! татăлса кайнă пек пулчĕ, тăвăнса килчĕ шалта»* (31 с.).

Пурнăç хăй евĕрлĕхĕ, юрату вăрттăнлăхĕ пирки нумай шухăш повеçре. Хăш-пĕр чух ытлашши шала та кĕрсе каять автор, отступленисем тăсăларах каяççĕ, публицистика енне сулăнаççĕ, сюжет йĕрĕнчен айккине пăрăнни те пулать (2-мĕш пайĕ, IV, 34 с.; 3-мĕш пайĕ, III, 45 с.). Анализ тума пĕлнин тăсăмĕ ку, ахăртнех.

*«Сăлтавсăрах ахăлтатса кулма хистекен туйăм çухалнă, пурнăç çине кăлтăксене асăрхамасăр пăхтаракан асамлă тĕкĕр ӳксе чăл-пар саланнă»* (13 с.).

*«Вăл татах тем те пĕр063 каларĕ, анчах ун сăмахĕсем çĕтĕлнĕ тумтир пек йӳнĕ те ирĕлнĕ юр пек тĕссĕр туйăнчĕç мана»* (23 с.).

*«Пĕр ыткăнма пуçласан вăхăт чĕлпĕрне татса тарнă урхамахла ĕрĕхтерет»* (24 с.). Çакăн йышши тĕслĕхсене ăнăçлисем шутне кĕртмелле. Повеçĕн композицийĕ (обрамлени) тĕп сăнарăн аса илĕвне куç умне вĕçленнĕ хитре ӳкерчĕк пек кăларса тăратать.

**А. Мышкина** пĕрремĕш пысăк проза хайлавĕ кун çути куриччен сăвăсем, кĕске калавсем çырнă. Унăн «Виçĕ хĕрпе сарă каччă» повеçне* вуласан, автор сăмах мехелне туйса ĕçлени търех курăнать. Чĕлхи типтерлĕ, кĕске предложенисемпех шухăшне уçса пама пултарать: *«Туслăх çур утравĕ… Тĕрĕссипе ун ячĕ апла мар. Нимĕнле ят та çук унăн, ăна эпĕ çапла ят панă. Çак çĕр лаптăкĕ пирĕн туслăха çуратрĕ. Çирĕплетрĕ. Кайран вара вăлах уйăрчĕ…*

* Ялав. 1995. 7№. 3–23 с.

*Туслăх çур утравĕнчен тунсăх çур утравĕ пулса тăчĕ»* (3 с.).

*«…Кашни вăхăтăн хăйĕн илемĕ, хăйĕн пуянлăхĕ, хăйĕн сăрри. Кашни çулах вăл урăх. Кăшт та пулин урăхларах.*

*Нумай чухне эпир, хамăр кулленхи ĕççем ăшне путнăскерсем, çакна асăрхамастпăр. Пирĕншĕн паян та ĕнерхи пекех, кăçал та пĕлтĕрхиллех.*

*Инçе çултан таврăнсан кăна çак улшăну ытла та витĕмлĕн курăнать. Эс пĕлекен, чуна çывăх паллăсем таçта çухалнă, саншăн ют сăрăсем çуралнă»* (17 с.). Ансат сăмахсемпе Мышкина тарăн пĕтĕмлетӳсем тума сĕмленет.

Çамрăксен хушшинчи кăткăс çыхăнусене уçса пама пултарни те, геройсен чун ыратăвне, хусканăвĕсене, шухăшлавне хăйсене тивĕçлĕ сăнлама тăрăшни те, ача (Сергей) чунне, ун хурлăхне ачан хăйĕн куçĕпе кăтартма пултарни те прозаик хайлавĕсенче куçкĕретех.

Нумай сăмахсăр чĕрĕ ӳкерчĕк тума пултарать Мышкина: *«Валя… Валентина. Тухса кайрĕ те вăл – пӳртре те тĕксĕмленчĕ. Пĕр минут каялла кăна, хĕрарăм тĕпелте кăштăртатнă чух, пĕтĕм пӳрт хаваслă та пуянччĕ. Халĕ вара каллех чухăнланчĕ, салху сăн çапрĕ ăна»* (14 с.).

*«…Куçра чун ӳкерĕнет теççĕ. Çавăнпа пуль Коля тетĕшĕн куçĕ темле хаяр, тискер те тĕссĕр. Чĕрĕ пурнăçăн пĕр таппине те палăртман вилĕ куççем <…>. Коля тетĕшĕпе пĕр пилĕк минут калаçсанах унран инçерех пулас кăмăл çуралать»* (Пурнăç техĕмĕ, 17 с.)[**].

*«Тасалăхпа илемлĕх янравне илтми, туйми пуçларĕ (Артур. – В.Н.). Пурнăçĕ темле тĕпсĕр шурлăх пек пулса тăчĕ. Çăтать те çăтать, чыхăнтарать, путарать. Çак пурнăçăн кашни сехечĕ, кашни минучĕ ăна темĕнле чăнкă çыран патнелле илсе пычĕ. Тĕксе яма меллĕ самант кĕтрĕ»* (17 с.).

«Çурçĕр хыççăнхи шăнкăрав»[***] повеçĕн те чĕлхи аван. Çамрăк çыннăн чун-чĕре хусканăвĕсене (кунта – Диана, Таня, Иван) тишкерме пултарать терĕмĕр Мышкина. Çапах та, повеçе пĕтĕмĕшле пăхас пулсассăн, вăл пĕчĕк

---

[**] Ялав. 1996. 1№. 14–21 с.

[***] Ялав. 1997. 3№. 75–112 с.

калавсен пуххине аса илтерет. Произведени пайӗсем ирӗклӗх патне туртӑнакан эпизодсем евӗр. Уйрӑм калав шӑнӑрӗсем те теме пулать. Диана йӗрӗпе Иванпа Таня, Настя йӗрӗ пӗр-пӗринчен уйрӑлса каясшӑн. Ирина – Валентина Михайловна йӗрӗ те хӑй ӑшне туртса кӗрсе каясшӑн. Петӗр сӑнарӗ ӑнсӑртран курӑнса каять те çавӑн пекех ӑнсӑртран çухалать. Дианӑна ӑнланма кирлӗ пулнӑ пуль-ха вӑл. Анчах та ку калаçу хыççӑн Диана татах та «хупӑнса» ларать. Вӗçӗнче те вӑл «уçӑлсах çитеймест». Асӑрханӑ уйрӑмлӑхсем авторӑн стилӗпе çыхӑннӑ тесе шутлама май параççӗ. Стиль кӗскелӗхӗ (лаконичность) хӑш-пӗр чух прозаика ытла та çирӗп чикӗсенче тытса тӑрать, сюжет йӗрӗсем хушшинчи çыхӑнӑва «çемçен йӗркелеймест», вӗсене пӗр-пӗринчен уйӑрать. Геройсен хисепӗ нумай пулни, вӗсем пӗр тан пуласшӑн ӑнтӑлни, хӑйсен йӗрӗсене хӑйсем йӗркелеме хӑтланни, паллах, повесть чиккинчен тухакан япала.

Мышкинан тепӗр повеçӗ хӑйӗн илемлӗ ячӗпе тӳрех илӗртет. «Сӳннӗ ӗмӗтсен утравӗ» ятлӑ вӑл. *«Шел, ачалӑх нумая мар. Çитӗнсе çитнӗçемӗн ӗмӗтсем те сайраланаççӗ. Пурнӑçӑн аслӑ çулӗ çине тухнӑ çамрӑкӑн вара ӗмӗтленме вӑхӑчӗ юлмасть.Ӗнтӗ ӑна ӗмӗт асамлӑхӗ илӗртмест. Вӑл унӑн çунаттисене те касмаваскать. Çунатсӑр ӗмӗт вара сӳнет… Сӳннӗ ӗмӗтсен хӑйсен утравӗ. Вӗсем каялла таврӑнмаççӗ…»*[*] (35 с.). Тӑлӑх ӳснӗ çамрӑк çын шӑпи çинчен ку хайлав. Анлӑрах пӑхсан вара, пурнӑçӑн аслӑ çулӗ çине тӑнӑ кашни çамрӑк шӑпи çинчен те. Йывӑрлӑхсем умӗнче çирӗпленсе çитмен çунатсем час хуçӑлаççӗ мар-и? Пурнӑçланман тӗллевсем вара пуçтарӑнса пырса чӗрене шалтан хавшатаççӗ.

Интернатра ӳснӗ Никантӑр характерне Мышкина аван уçса панӑ. Интернат ачисем кашни кун ашшӗ-амӑшне кӗтнине те, çемье ӑшшишӗн тунсӑхланине те, «ыратӑвӗ, тунсӑхӗ тата курайманлӑхӗ» пысӑк пулнине те, интернатран тухса кайсан вӗсене час-часах синкерлӗ шӑпа кӗтнине те… Çапах та героя пӗтӗмпех тӳрре кӑларма юрамасть: *«Хурах-и, кӗлмӗç-и? Нихӑшӗ те сумлӑ мар. Шанӑçа çухатнӑ каччӑ хӑй пурнӑçӗнче урӑх çул курмарӗ…»* (23 с.). *«Куçӗнчи куççулӗпе урайӗнчи çынӑн чунӗ те типрӗ. Унра тем хуçӑлчӗ, вилчӗ.*

---
[*] Ялав. 1998. 8№. 9–35 с.

*ӗненӳ, шанăç пулчӗ-ши ку? Е темскер урăххи. Хальлӗхе çакна Никантăр хăй те ăнланаймарӗ-ха. Çакна вăл туйрӗ, çапах ăнланаймарӗ. Темле тӳрех çитӗнсе кайрӗ каччă…»* (23 с.). Ӗçсӗрлӗх тени кашни çирӗпленсе çитмен çамрăка ураран ӳкерме пултарать, паллах. Никантăр пек шăпаллисене вара, никамран та пулăшу кӗтме çуккисене, тата та йывăртарах. Патшалăх учрежденийӗнче ӳснӗ ачасем тата унтан лайăххипе пӗрле начар опыт та илсе тухаççӗ: вӗсенчен чылайӗшӗн потребитель психологийӗ аталанать. Ку вăл вӗсен айăпӗ мар, инкекӗ. Ыттисен ыркăмăллăхӗпе, шеллевлӗхӗпе çак ачасем пӗлсе тăрсах (сознательно) усă курма та вӗренеççӗ. Каялла тавăрса памасăр ыттисенчен ытларах та ытларах ыйтса илме, пурне те хăйсем умӗнче парăмра тесе шутлама, лайăхраххинчен тата лайăххине суйласа илме тăрăшса пӗр вырăнтан тепӗр вырăна куçса çӳреме… Шеллевлӗхпе чăн пурнăçăн чăн сăнне курма вӗрентмесӗр мар-и…

*«…Çирӗп чунлисене хуйхă касаймасть. Вăйлă кăмăллисене пурнăç çилтăвăлӗ те ураран ӳкереймест»* (35 с.) – çак шухăш Никантăр чӗринче те çирӗпленнӗ пек туйăнать. Апла пулсан вăл пурнăçра хăй вырăнне тупассине шанчăк пур.

Çак çулсенче литературăна тепӗр çӗнӗ ят кӗрет, **Надежда Ильина**. ЧПУ кăларакан «Ытлари» альманахра пичетленнӗ вăл, «Ялав» журналта. Пӗрремӗш произведениех авторăн шалтан тухакан илемлӗх туйăмӗпе илӗртет («Юлашки кӗр», 1993)*. Ильина васкамасăр, шухăшласа çырать. Альма ятлă йыттăн шалти тӗнчине, ун асапне асăрхаса, ыраттарасран хăранă евӗр уçса парать вăл. Кунта тӳрех çакна каласа хăварни вырăнлă: т е п р и н (çитӗннӗ çыннăн, ачан, чӗрчунăн) тӗнчине унăн хăйӗн куçӗпе уçса пама тăрăшать çамрăк прозаик (Витали «Пăхнă иккӗн кантăкран» (1996) калавран**, Динго йытăпа пӗчӗк арçын ача – «Турăсăр тупнă телей» калав*** (1999)). Çутçанталăк пулăмӗсене ӳкерсе панинче Ю. Скворцов витӗмӗ те сисӗнет: «Мӗн усă турăн эсӗ çак çӗр çинче? Ăçталла утрăн? Мӗн хăвартăн çӗр çинче?» («Хӗр кӗлетки») ыйтусенче Скворцовăн – «мӗншӗн пурăнатăн эсӗ?» ыйтăвӗ.

---

* Ялав. 1997. 9№. 118–120 с.
** Ялав. 2002. 5№. 60–66 с.
*** Ялав. 2001. 12№. 7–20 с.

Якатса çитермен вырăнсем те пур, паллах. Сăмахран, Альма аса илекен ÿкерчĕксем чăнлăх картинчен тухмаççĕ-ши? *«Тарăн пĕве хÿри вĕçĕнчи сĕлкĕш лупашкара хутланса кăвакарнă (те ĕçнипе, те шутсăр шăннипе), нимĕн те пĕлми çынна тупсан (хуçине. – В.Н.), каялла таврăнса, чÿречерен ик уран кармашăнса, нăйкăша-нăйкăша ăшă пъртре ларакансене инкек пулни çинчен систернĕччĕ»* (Юлашки кĕр, 118 с.); *«Тепĕр çу кунĕнче Тимуххан кĕçĕн хĕрне путма пуçласан çăлнă хыççăн та, кайран та, час-часах çемье пуçĕ кăшт хĕрсенех Альмăна ыталаса: «Ах, чунăм, тусăм, йытă мар, пирĕшти эсĕ пирĕншĕн <…>» – тесе пуçне чиксе ларнă çĕртех сĕнк пулатчĕ»* (118 с.); *«Тахçанхи тĕттĕм каç сĕмлĕхĕнче ырă мар шухăшлă çын вите хыçĕнчи ыраш улăм купи патне шăрпăкпа краççын йăтса йăпшăннă чух та, хуçине юман вăрманĕнче çăвăр хир сысни тапăнсан та, Тимуххан аслă ывăлне усал ачасем укçа ыйтса хĕнеме пикенсен те хăраса тăман»* (118 с.). Килти йытă пурнăçĕнче (вăл вăрăм пулсан та) çавăн чухлĕ паттăрлăх пулни иккĕлентерет. Пулнă пулсан та, ĕнентерÿллех тăвайман ку самантсене автор, çав шутра хуçи те унпа пĕр вăхăтрах пурнăçран уйрăлнине те. Çавăнпа та «Йыт ылханĕ ахаль пулмасть» текен каларăша сăлтавлани сахалтарах калавра, кăштах шухăшласа тупнă пекрех те. Альма ытларах ырă кăмăллă, яланах каçарма пултаракан çынна аса илтерет. «Турри курать» пулĕ те, пĕтĕмлетсе калакан сăмаха ытларах сăлтавламалла пулнă. Пĕтĕмĕшле илес пулсан, çапах та, калавĕ хитре.

«Хĕр кĕлетки» (1996) калавра[****] çамрăк автор тĕрлĕ сăрăсемпе пĕлсе, питĕ вырăнлă усă курать. Хĕрарăм сăнарне те, çутçанталăк ъкерчĕксене те куç умне тухса тăмаллах ăсталать. Тулса çитнĕ савăтра шыв пĕр тумлам ÿксенех тăкăнса каять. Çын пурнăçне те тахăш самантра вак-тĕвек пек курăнакан япалах улăштарма пултарать. Çак саманта, хĕрарăмăн кăмăл-туйăм хусканăвне питех те сисĕмлĕ палăртса, ÿкерсе кăтартма пултарнă Ильина. «Чĕркуççи таран пăтранчăк шывĕ» анчах лайăх улшăнăва юхтарса ан кайтăрччĕ тесе калас килет малалла кайса.

Тĕлĕкре те тĕлленнĕ Хĕр Кĕлетки художник пулма ĕмĕтленнĕ хĕрарăма,

[****] Ялав. 1998. 7№. 53–58 с.

халĕ тасамарлăхпа нĕрсĕрлĕхре хăйне çухатнăскере, вăл çутă ĕмĕтлĕ «урăх тĕнчене, асаилӳ тĕнчине» тавăрать. Тĕп сăнар – Хĕрарăм, ячĕ çук унăн. Пĕтĕмлетӳллĕ сăнар теме пулать ăна. Çакă калавăн пĕлтерĕшне анлăлатать.

«Шăранса та пĕтми кăвар» (1997)[*****] Н. Ильинан Иллеслу псевдонимпа тухнă. Шалкăм çапса уйăх вырăнпа выртакан Арçентие пăхма тăхăр ачаран чи кĕçĕнни, сăпкара выртнă чух ашшĕ ăна кăмакара пĕçертсе яни, чи юратманни, килнĕ. Халĕ тин хăй йăнăшне, парăмне туйса илнĕ Арçын асапне Ильина лайăх сăнарласа панă.

**Людмила Сачкова** ячĕ чăваш литературинче 90-мĕш çулсенче çирĕпленет. Республикăра тухса тăракан хаçат-журналта вăл пичетленсех тăрать. Пĕрремĕш кĕнеки (Чĕкеçĕм, чĕкеç. Калавсемпе повеçсем) 1996 çулта Чăваш кĕнеке изда-тельствинче тухнă. Унта автор çак çулччен пичетленнĕ произведенисене кĕртнĕ. Прозăра, драматургире ĕçлет вăл, прозăлла сăвăсен хăйне евĕрлĕхĕпе илĕртет.

Мĕн асăрхатăн-ха тӳрех «Чĕкеçĕм, чĕкеç» кĕнекене алла тытсан? Чылай чухне Сачкова прози сăвă патне туртăнни сисĕнет. Тĕслĕхе хайлавсенчи хăш-пĕр сыпăксене илер:

*«Тулли уйăх улшăнса çурла пулчĕ, тӳпери çăлтăрсене çулса вырчĕ. Çăлтăр хĕмĕ ӳкрĕ çĕр çине, çĕнĕ пурнăç тĕвви – ăш-чике. Анчах… Ах, анчах! Чун савни сивĕнет-çке тӳрех!.. Ма çапла вăл пулать тепĕр чух. Калăн, ăшă шыв сивĕнсе пăрланать. Халь кăначчĕ юрату – шĕл-кăвар. Вăййи вара мĕнешкел хаяр…»* («Чун», 11 с.);

*«Кунсем килеççĕ тĕрлĕрен: паян – хитрен, ыран –васкавлăн е кичеммĕн. Ачалăх яланах чечен» (*«Читлĕхри юрă», 20 с.*);*

*«Çулĕ вăрăм, çулĕ инçе: сăвек те, айлăм та, тăвалла та, лакăм та, тепĕр çĕрте хĕсĕк те» (*«Ĕмĕтпе ĕмĕтсĕрлĕх», 44 с.*).* Проза «тикĕс» пырать Сачкован, çав вăхăтрах вăл «илĕртмĕш» умĕнче тытăнса тăраймасть пек, пĕр çаврăм «сăвăласа» та илет. Ятарласа «тăрăшни» мар пуль тетĕп çакă. Синтаксис шайĕнче анчах та мар çак туртăм, шалтан тухакан ăнтăлу, пĕчĕк пулăмран пысăк

---
[*****] Ялав. 2000. 7№. 52–58 с.

пĕтĕмлетӳсем тума хистекенни, тĕрĕсрех каласан, пурнăçри самантлăхсене ĕмĕрлĕх куçĕпе виçме туртăнни тесе калас килет. Çавăнпах пулĕ Сачкован илемлĕ прозăлла сăвăсем çуралаççĕ. Новелла е баллада жанрĕсене килĕштернин пĕр сăлтавĕ те çакăнта пулĕ.

*«Лăскăнчăк хура пĕлĕт татăкĕ курпунне кăларса çĕр çине ӳпĕннĕ те хурланса-и, тарăхса-и, йĕрет те йĕрет…»* («Çутçанталăк – çут тĕнче», 27 с.); *«Тин çеç выçă пулнă куçĕсем (Арçукăн. – В.Н.) ирĕлсе саланнă…»* («Чĕре сури», 17 с.); *«Ашшĕ... ашшĕн сăнне те йĕркеллĕ астăваймасть Ира. Урă чух килте çукчĕ вăл, ӳсĕрле урса таврăнатчĕ те, ашшĕ сăнĕ çине пăхма мар, куç хупса тухса таратчĕ ача килтен…»* («Маму», 50 с.). «Ăмсану» калав та (вăл таçтан аякран Ю.Скворцовăн «Хĕлĕх-хӳре кăвакалне» аса илтерет пулсан та) ăнăçлă пулнă унăн. Çутçанталăк пулăмĕсене те, геройсене те хăй евĕрлĕ сăнлать Сачкова, сахал сăмахпах вăл нумай япала пирки калама пултарать. Унăн шухăшлав стилĕнче кĕскелĕх тĕпре пек туйăнать.

Хайлавсенчен нумайăшĕ Сачкован синкерлĕ вĕçленет. Пурнăç парнелеме, ăна илемлетме тивĕçлĕ юрату вилĕм патне илсе пырать («Чун», «Читлĕхри юрă», «Чĕкеçĕм, чĕкеç…»). Пĕчĕк Арçукăн пĕчĕк ĕмĕчĕ (тутă пуласси – «Чĕре сури»), хитре мăшăрăн хитре юратăвĕ те («Ĕмĕтпе ĕмĕтсĕрлĕх») шăпа аллинче вăхăтсăр татăлать. Оля-Улькка пурнăçĕ те (Ю.Скворцовăн Укахвипе Униç йĕрĕсене аса илтерекенскер) трагедиллĕ хывăнать («Оля-Улькка»). Пурнăç юхăмĕпе вăй хумасăр ишсе пыракан Альăпа («Çаврăм») Миккана та («Микка») малашлăхра савăнăç кĕтмест… Трагеди калăпăшне уçса пама пĕлет автор. Тарăнăшĕ вара яланах уçăлса пĕтеймест. Кунта шухăшлав стилĕн кĕскелĕхĕ пахалăхран çитменлĕхе куçса кайма тăрать, пĕр япалан икĕ енĕ темелле. Мĕншĕн? Мĕнле майпа? текен ыйтусем çине туллинрех хурав илес килет. Произведенисенче авторăн хăйĕн те çак ыйтусене хурав пама мехел пур. Сăмахран, хăш-пĕр самантсем хăйсем çинчен ытларах калаçтарасшăн (Ольăран Улькка мĕнле майпа пулса тăнине ытларах сăлтавламалла пулнă). Пĕр çыннăн икĕ сăнарĕ хушшинчи пурнăçне кăтартнă пулсан, хайлав пĕлтерĕшлĕрех, туллирех пулнă пулĕччĕ. Е тата «Ĕмĕтпе ĕмĕтсĕрлĕх» – ĕмĕтсĕрлĕхĕ ĕмĕтĕнчен

те пысăкрах тĕрĕссипе. Калас текен шухăшсене тарăнрах уҫса пама Сачкована анлăрах текст кирлĕ пек туйăнать, тен, пысăкрах формăсем те.

«Ытарайми куҫсем». Прозăлла сăвăсем, калавсем, очерксем (Шупашкар: Калем, 2000. 100 с.) – Сачковăн иккĕмĕш кĕнеки. Кунта 1996–2000 ҫулсенче пичетленнĕ хайлавсем кĕнĕ. Прозăлла сăвă – ҫăмăл жанр мар. Сăмахран, И.С. Тургенев ун патне пурнăҫ вĕҫĕнче анчах пырса тухать. Чун ыйтни те ҫав вăхăталла пулма пултарнă, паллах. Анчах та ку пысăк ăстасем хăйсенчен нумай ыйтнине те пĕлтерет. XX ĕмĕр вĕҫĕнчи чăваш литературинче ҫак жанр аталаннине палăртмалла. Уйрăмах ҫырас ҫул ҫине тин кăна тăнă ҫамрăксем прозăлла сăвă «кăмăлланине» асăрхатăн. Мĕнпе ҫыхăннă-ши ку пулăм? Чи малтанах, саманапа тесе калас килет. Икĕ ĕмĕр чикки ытла арпашуллă пулчĕ. Поэзипе прозăна пĕрлештерес тени – ҫураҫулăх тупас тени те. Ҫак туртăм ытларах хĕрарăмсен пур тенĕччĕ ҫӳлерех. Ку жанрпа ĕҫлекенсем хушшинче хĕрарăмсем ытларах пулнин тупсăмĕ те ҫакăнта мар-ши?

Ҫак шыравсем хушшинче Людмила Сачкова опычĕсем ăнăҫлă темелле. Хăйне канăҫсăрлантаракан шухăш-кăмăла тĕрлĕ енчен (тĕрлĕ сыпăксенче) тарăн уҫса пама тăрăшать вăл («Ытарайми куҫсем», «Хĕреслĕ ҫул», «Сĕвем-сĕвем шур шухăш»). Ҫав вăхăтрах ы т т и с е м кăнттам алăсемпе тытасран хăй тĕнчине хътĕлесе те хăварма пултарать. Сăнарлă шухăшлав вăйлă аталаннă унăн. Сăвăсен структури классикăллă формăсен чиккинче. Анчах та лирика геройĕ туйăмсене хăйне евĕрлĕ курăмлă ӳкерчĕксем урлă уҫса парать (1-мĕш пайĕ). Тепĕр пайĕнче (вăл калăпăшĕпе чылай чух пĕчĕкрех абзац-предложени, час-часах ыйтуллă) – пĕтĕмлетӳллĕ шухăшĕ ăспа туйма, хаяр чăнлăха ҫураҫтарас тени пулĕ Сачкова прозăлла сăвăсем патне туртăннин, прозине те поэзи сывлăшĕ пач пăрахса кайманнин сăлтавĕ. *«Никам та айăплă мар. Анчах темшĕн ҫаплах пулса тухать пурнăҫра. Хĕвел пăхнă вăхăтрах ҫумăр ҫăвать. Асамат кĕперĕ шăпах ҫавăн чухне карăнать те вара...»* («Сывă-и, аякри тăван?» (Ҫул очеркĕсем, 78 с.)).

Калавсенчен тĕслĕхе «Чике старик ĕмĕчĕ» хайлавне илер. Маларах вăл

«Ялавра» пичетленнӗччӗ*. Кунта Сачкова ахаль ҫынна вӑл пӗлмен, туйса курман асаппа хурлӑха хире-хирӗҫ тӑратать. Шеллемест те пек вӑл вулакана хӑрушӑ чӑнлӑхпа пӗччен хӑварса. Тепӗр тесен, мӗншӗн шеллемелле-ха унӑн теприсене чӗререн шеллеме пултарайман ҫынсене? «Шалккӑ мӗскӗне, – шеллесе шухӑшларӗ хӑй *ӑссӗн*. – Мӗн таранччен кӳренӳллӗ пуль вӑл хӑй шӑпине» (48 с.). Теприн трагедине ӑспа анчах ӑнланма ҫук пулӗ ҫав. Паллах, Савватий Ивановича шеллесе ӑна хирӗҫ утӑм тумалла пулнине пӗлтермест ӗнтӗ ку. Анчах та ҫынна: «Кирлӗ мар мана сан юратӑву, *телейсӗрскер*», – тесе ҫапса хуҫма юранине те пӗлтермест. «Пӗчӗк ҫыннӑн чӗри пысӑк» пулӗ те, анчах та ҫын тени ҫиелти илемлӗхе куҫ хывать чи малтан. Ҫиелти курӑмлӑх пулмасан чун сисӗмлӗхӗ кирлех мар пуль ҫав ӑна.

*«Савватий вара ванна пӳлӗмӗнче кранран шӑпӑртатакан сивӗ шыв чашлавӗнче пӗр-пӗччен макӑрчӗ те макӑрчӗ...»* (56 с.). Ҫиелти тивлетлӗх – виҫӗ пӳлӗмлӗ хваттер, унти хӑтлӑх… пӗр самантрах арканать. Сисӗмлӗ вулакана ку калав пурнӑҫ мӗнле черчен, шӑпа епле хаяр та вылянчӑк пулма пултарни пирки шухӑша ярать. Кам пӗлет, тен ун вылявӗ хӑҫан та пулин сана е санӑн ҫывӑх ҫыннусене пырса ҫапсан… Эппин, асӑрханулӑрах пулмалла этемӗн. Хӑйӗншӗн анчах мар, т е п р и н ш ӗ н те яваплӑх туймалла.

Пӗтӗмлетӳллӗ шухӑш патне туртӑнакан жанрсен аван тӗслӗхӗсем шутӗнче **О. Туркай** хайлавӗсене те асӑнмалла. 1998 ҫулта «Санӑн йыхравна эпӗ илтрӗм» кӗнеки тухрӗ унӑн. Ку кӗнекене 1987–1996 ҫулсенче ҫырнӑ прозӑлла сӑвӑсем, пӗчӗк калавсем, философиллӗ тӗрленчӗксем кӗнӗ. О. Туркайӑн тӗлӗнмелле пултарулӑх пур – ҫ а к с а м а н т п а пурӑнма, киленме пултарни («Ӑҫтаваскатӑн, тӑванӑм?», 3 с.; «Кӑпӑшка шап-шурӑ юр ҫийӗн…», 8 с.; «Ача хитре тетте курнӑ…», 13 с.). Пурнӑҫӑн кашни самантне вӑл ӗмӗрлӗхӗн хусканӑвӗ, чӗтревӗ, пӗр пайӗ… пек йышӑнать («Эпӗ эсӗ ӑ вӗҫсӗр-хӗрсӗр уҫлӑх», «Аслатиллӗ, ҫиҫӗмлӗ ҫумӑр…», 28 с.). Ӗмӗрлӗхри пӗччӗнлӗхе вӑл тивӗҫлӗ йышӑнать («Атӑл леш енчен шуса хӑпарнӑ шурӑмпуҫ ҫутийӗ…», 27 с.; «Йӑпату», 31 с.; «Каллех пӗччен», 49 с. …). Ҫӗр ҫинчи тӗрӗсмарлӑха ҫивӗч туять

* Ялав. 2000. 2№. 13–17 с.

(«Çӳллӗ ту çинче çӳллӗ йывăç ӳсет», 18 с.; «Пахчари çӗмӗрт», 54 с.). Хайлав структуринче чылай чухне рефренсем тӗл пулаççӗ («Тӗнче пӗтмен-ха, пурнăç вӗçленмен…», «Манăн сан пата хӗл пулса таврăнаясчӗ», 38 с.; «Килӗмре шăп», 39 с.; «Эс кӗçӗр мана манса кайнă», 50 с.).

**Михаил Сунталăн** (вулакан ăна **Сарри Мишши** тесе те пӗлет) пултарулăхӗ тӗрлӗ енлӗ. Вăл публицист та, журналист та, поэт та, прозаик те, философи наукисен докторӗ.

Сунтал чăваш культуринче ыттисемпе пăтраштармалла мар тӗнче йӗркеленӗ. Çак тӗнчен никӗсӗнче – чăвашлăх ыйтăвӗсем. Тишкерекен тапхăрта унăн «Аçа çапнă чун» кӗнеки пичетленнӗ (Аçа çапнă чун. – Шупашкар: Чăваш кӗнеке издательстви, 1997. 187 с.). «…Унта кашни йӗркере аçа çапнă чăвашăн чунӗ çырмари вутчуль пек пытанса упранать», – тет автор ум сăмахра. Кӗнекене «Çула тухнă кун», «Турилкке çинчи чӗре» повеçсем, калавсем, юмахсем кӗнӗ. Пуринче те вӗсенче чăваш шăпи, унăн паянхи кун-çулӗпе пуласлăхӗшӗн чун ыратни сисӗнет. Ăсӗ вара çав чăваш тӗнчи тенин тупсăмне шырать, халăхăн хăйне евӗрлӗхӗ пирки шухăшлать. *«Чăн малтан мана чăваш шăпи интереслентерет. Унăн чунне, тем, вупăр пек усал пусса тăрать пек. Ниепле те сирсе ывăтса яраймасть вăл ăна, халӗ те çӗкленеймест. Хăйӗнчен хăй хăрать пек вăл. Пурнăç чăнлăхне чухласа илсенех вара хăй те темле урăх çын пулса каяссăн туйăнать»* («Ай-ара, аяра!», 177 с.).

«Чăваш ачине чăваш пек çитӗнтересчӗ» – текен шухăш час-часах тӗл пулать Сунталăн. «Тăван чӗлхесӗр, кӗнекесӗр» ӳстернӗ («Çула тухнă кун», 7 с.) ачана çитӗнсе çитсен тин «темле çемье, тăванлăх, чăвашлăх, ят яма юраманни» çинчен ăнлантарма тăрăшни усси сахалрах пулӗ (19 с.). Çапах та хăв хăш халăх ачи пулни ăн ай шайӗнче е чун тӗпӗнче хывăнса юлса çынна мӗнпе те пулин аса илтерсех тăрать. «…Юрлаççӗ кăна… Шел, чăвашла пӗлмеççӗ. «Кукаçипе куками пӗлӗм пӗçерееççӗсӗр» пуçне хам та урăх ним те кăлараймастăп та… Ялта салтак юрри юрласа, тутăр сулласа çъренине те курнăччӗ. Илемлӗ йăла. Хӗрсем тутăр парнелеççӗ. Тăванӗсем килтен киле чӗнеççӗ…» – шухăшлать салтака каякан Петӗр. Чун тӗрекӗ тупма пулăшмалла пулнă та…

«Турилкке çинчи чĕре» повеçре те автор ачасене мĕнле ӳстерме юраманни пирки çырса кăтартнă. Тĕлĕк чăн пурнăçа хывăнать те, повесть анлă метафора пулса тăрать. Хăш-пĕр юмахсем те çак ретрех: «Кăвак юман», «Асамлă пуртă», «Кăвак хуппи», «Ай-ара, аяра».

Повеçсен тытăмĕ хăйне майлă. Иккĕшĕ те вĕсем темиçе уйрăм сыпăкран тăраççĕ. Кашни сыпăкăн ячĕ пур. Уйрăмлăхĕ: пĕрремĕшĕнче унти пĕр пулăмсенех темиçе çын куçĕпе куратпăр, иккĕмĕшĕнче – ĕçсем пĕр йĕрпе пыраççĕ. Иккĕмĕшĕнче те сыпăксем пурнăçри чи курăмлă самантсене сăнлаççĕ. Вĕсем вĕçленнĕ хайлав пек те, çав вăхăтрах – пĕр пысăк хайлавăн пайĕсем.

Сунталăн илемлĕ тĕнчинче хĕрарăм пĕлтерĕшĕ пысăк. Арçынпа Хĕрарăм хушшинчи çыхăнусем те унăн ытларах тасалăхпа уйрăлса тăраççĕ («Аça çапнă чун», иккĕмĕш повеçри «Пылак çырла» сыпăк, «Çăтмах», «Мĕлке ташши»). «Тĕнче пуласлăхĕ, ман шутпа, хĕрарăмран нумай килет, тата вăл епле ача çуратса ъстернинчен те паллах…» (Ум сăмах, 2 с.). Хăш-пĕр чух Хĕрарăм сăнарĕ тахăш самантра хăйĕн асамлăхне çухатма пултарать, ахаль Хĕрарăм пулса тăрать: «Пур-ши вăл пирĕн Чăваш енчен Мона Лиза майлă хĕрарăм?..» (Джоконда, 102 с.). Малалла вăл геройăн кăмăл-туйăмĕн питĕ час пулса иртекен улшăнăвĕсене палăртать. Вĕçĕнче вара çакăн пек пĕтĕмлетъ тăвать: «Ара, ку кунта тин кăна кулкаласа ларакан Шупашкар матки-çке, нимĕнле матрона та, нимĕнле Мона та мар. Ку, ку … чăваш Джоконди ку, акă мĕн!» (107 с.). Пĕр статьяра вара тата вирлĕрех пĕтĕмлетъсем патне килсе тухать: **«…Хĕрарăм ирĕке тухнă вĕт халь! Ирĕклĕ хĕрарăм ача çуратса ларать-и вара. Юратупа йăпанать те, тăранса çитсен арçынне çумĕнчен тĕксех ярать. Кай, кирлĕ пулсан татах тупатăп»**, – тет[10]10. Пурнăçĕнче хурипе шурри, ыррипе усалли, асамлипе ахалли пĕрлех пулĕ. Анчах та кунта чăваш шухăшлавĕнче палăракан иккĕллĕ тĕнче йышăнăвĕн витĕмĕ те пур пек. Пĕр çынрах чăвашăн хире-хирĕç пахалăхсем çыхăнса тăраççĕ. Наци характерĕн вăрттăнлăхĕ, тупсăмĕ те, тен, çав пахалăхсем пĕр-пĕрне куçма пултарнинче. Ку вăл яланах «ылтăнваррипе» пыни мар, мĕншĕн тесен пĕр пахалăх самантрах теприне куçма пултарать. Сăмахран, чăвашăн сăпайлăхĕ, çынна хисеплеме пĕлни нумай чух хăйне хăй

хисеплеменнине куçать.

Юмахĕсене «Ыратаканни çинчен шухăшлани» ярăм («Думы о наболевшем») тесе палăртас килет. Жанрĕпе вĕсем «философиллĕ юмахсем». Умĕнхи традицисенчен чи малтанах Иван Мучи пултарулăхĕ аса килет. Çапах та пĕтĕмĕшле литература контекстĕнче ку юмахсен хăйне евĕрлĕхĕ куçкĕрет. Вĕсем ятарлă тишкерĕве тивĕç. Хальлĕхе çакна каласа хăварар: вĕсенче халăх историйĕ, халăхра çӳрекен ку е вăл каларăш, халап çинчен, тĕрлĕ пулăмсем, ăнлавсем пирки шухăшлани тĕпре.

**Юрий Терентьев** литературăна 90-мĕш çулсен пуçламăшĕнче кĕнĕ. Унăн малтанхи повеçсенчен пĕриех – «Кремль сакки сарлака»* – хăй çинчен нумай калаçтарчĕ. Апла пулин те ятарлă тĕпчевсем, пĕтĕм пултарулăхне илес пулсан та, хальлĕхе çук. Шел, пурнăçĕ Терентьевăн çав тери кĕске пулчĕ. Анчах та унăн хăйне евĕр пултарулăхĕ чăваш литературишĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Терентьев литературăна сатирик пек кĕрсе юлчĕ. Унăн хайлавĕсене пĕр иккĕленмесĕр сатира аталанăвĕнчи çĕнĕ тапхăр тесе хаклама пулать. Анчах та унăн пултарулăхĕнче тепĕр ен те пур. «Амăш чĕри» калавах илер. Афганистанра ывăлне çухатнă амăшĕн трагедине кунта чуна витермелле çырса кăтартнă**. Автор хăй питĕ сисĕмлĕ чунлă пулнине те ăнланма пулать ку калавран. Пултарулăхĕнче хăй пурăнакан Вăхăт пирки шухăшланă Терентьев. Арпашуллă саманан инкекĕсене чĕре патне илнĕ. Тен, пурнăçĕ кĕске пулнин пĕр сăлтавĕ çакăнта?

1997 çулта, вилнĕ хыççăн, Элĕк типографийĕнче Юрий Терентьевăн «Кремль сакки сарлака» ятпа повеçсен пуххи тухнă. Унта «Чечек çыххи» (1998), «Кремль сакки сарлака» (1991) повесть-анекдот, «Анăçран тухнă хĕвел» («Коррида, самурайсем тата анăçран тухнă хĕвел», 1992), «Салхуллă пӳлĕх» («Çурхи тĕлĕк», 1994) хайлавсем кĕнĕ. Тĕпчекен тапхăрта унăн «Мăнкун иртсен – тунтикун» (1993)* повеçĕ пичетленнĕ. Çак повеçпе кĕнекери юлашки виççĕшĕнче антиутопи жанрĕн паллисем пысăк вырăн йышăнаççĕ. XX ĕмĕрте

---

* Ялав. 1991. 10№. 2–10 с.

** Тăван Атăл. 1991. 1№.11–48 с.

* Ялав. 1995. 7№. 44–62 с.

çак жанр вырăс литературинче те, пĕтĕм Европа литературинче те аталанать. Çак аталану чи малтан истори сăлтавĕсемпе çыхăннă: обществăра синкерлĕ пулăмсем, идеалсем пĕр-пĕрне хăвăрт улăштарнипе, çак идеалсене шыранипе.

Антиутопи чи малтан – хальхи пурнăçа, пулассине те пародилени, хак пама тăрăшни, çак вăхăтри лару-тăрăва йышăнманни. Антиутопи патшалăх системине те, çĕршыври лару-тăрăва та туллин кăтартса парать, малтанхи идеала аркатать. Пуласси, çак çулпах кайсан, хăрушă пулма пултарассине асăрхаттарать. Унта чăн пурнăçпа шухăшласа тупни уйрăлми пĕрлешсе каяççĕ. Структуринчи геройсен системи схемăллăрах. Тĕлĕк пысăк вырăн йышăнать – вăл психологи мелĕ анчах мар, автор тĕнчекурăмне, стильне кăтартса парать. Карнавал тĕнче туйăмĕ те пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать (мыскара, чаплă сăмахсене, лозунгсене пародилени, юрă-ташă, вăйă, ĕçни-çини…). Çакнашкал тата ытти уйрăмлăхсене те куратпăр Терентьев хайлавĕсенче.

Авторăн стилĕнче эпитет, танлаштару питĕ пысăк вырăн йышăнать. «Пĕррехинче, Христос чĕрĕлнĕ вырсарни хыççăнхи кун, *уй алăкĕ сысна çури евĕр уçăлчĕ те*, Шĕшлĕаври ялне яштака кĕлеткеллĕ çамрăк çын çитсе тăчĕ» (Мăнкун иртсен – тунтикун, 44 с.); «Эсĕ вăраххăн куç хупатăн, вăраххăн-вăраххăн, ту çине хăпаракан *ырхан та хĕсĕр кĕсре пек вăраххăн…*» (45 с.); «Пурнăç вăл *«Шупашкар – Мускав» пуйăс мар*, кашни юпа патĕнчех чарăнса тăмасть, малалла хыпаланать» (55 с.). Текст структуринче çине-çинех тĕл пулаканскерсем, вĕсем пароди йĕркеленĕвĕнче курăмлă элементсем пулса тăраççĕ. Повеçĕн пĕлтерĕшĕ аллегориллĕ. Халăхăн тимлĕхне экстрасенссем анчах çывăратса яман (90-мĕш çулсенче пурте экстрасенсорикăпа аташнă вăхăт пулнă темелле). Çынсем хăйсене влаçра ларакансем реформа туса пурнăçа лайăхлататпăр тенин пĕлтерĕшне ăнланайман.

Терентьевăн илемлĕ тĕнчинче кулăшпа трагеди, гиперболăпа пурнăçăн чăн саманчĕсем, гротескпа чун ыратăвĕ, фантастика мелĕсемпе физиологи очеркĕн паллисем пĕрлешнĕ.

Тишкернĕ тапхăрта, пĕтĕмĕшле илес пулсассăн, Д. Гордеев, Ю. Силэм, А. Тарасов хайлавĕсене те, Хв. Агиверпе В.Григорьев-Енĕш «чĕмсĕрлĕхне» те

асăрхамасăр иртме çук. Ку тема вара урăх калаçу валли пултăр.

## Литературăпа асăрхаттарусем

1 *Самойлов В.* Пурте сăвă çыраççĕ // Ялав, 2000. 11 №. С. 84–88.

2 *Можейко М.А.* Постмодернизм // Постмодернизм. Энциклопедия. Минск: Интерпрессервис; Книжный дом, 2001. С. 602.

Кунта çакна палăртса хăвармалла: хăш-пĕр наци культуринче, вăл шутра чăваш литература пĕлĕвĕнче те, «постмодернизм» ăнлав «этнофутуризм» ăнлавпа тава кĕрет. Паянхи кун вĕсен уйрăм пĕлтерĕшĕ, çыхăнăвĕ (соотношение) пирки тухса тăракан ыйту татăлнă теме иртерех. Эпир хальлĕхе этнофутуризма постмодернизмăн наци варианчĕ тесе йышăнас шухăшлă. «Постмодернизм» термин пĕтĕмĕшле литературăри (тĕнче литературинчи) хăй евĕрлĕ пулăма уçса пама пултарать. Çакна шута илсе статьяра юлашкинчен асăннă ăнлавпа çеç усă куратпăр.

3 Тĕплĕнрех çак кĕнекесене пăхăр: Постмодернизм. Энциклопедия. Минск: Интерпрессервис; Книжный дом, 2001. С. 601–618; *Курицын В.* Русский литературный постмодернизм. М.: ОГИ, 2000. С. 288.

4 *Можейко М.А.* Интертекстуальность // Постмодернизм. С. 335

5 Цитата çак статьяран: *Яковлев Ю.* Чунри уникалăха кĕретĕп... // Ар. 2001. Нарăс 6. 6№.

6 *Яковлев Ю.* Çавăнтах.

7 *Абрамов В.А.* Становление и развитие чувашской повести. Автореферат на соискание ученой степени кандидата филологических наук. Чебоксары, 2002. С. 16.

8 *Можейко М.А.* Переоткрытие времени // Постмодернизм. С. 569.

9 *Абрамов В.А.* Становление и развитие чувашской повести. Автореферат. С. 14, 16.

10 *Сарри М.* Пурнăç тупсăмĕсем // Хыпар, 2002. Чӳк 2. С. 2.

2003 ç.